# ХАМĂРĂН ПĔРРЕМĔШ АРХИТЕКТОРА АСĂНСА

**Çак кунсенче чăвашран тухнă тĕнчипе паллă архитектор Петр Егорович Егоров çуралнăранпа 275 çул çитнине халалласа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче асăну каçĕ иртрĕ. Унта республикăри паллă искусствоведсемпе художниксем, ученăйсем, ЧР Строительство тата Культура министерствисен специалисчĕсем, ЧНК хастарĕсем хутшăнчĕç.**

АСĂННĂ каçа институт директорĕ В.С.Григорьев уçрĕ: "Чăваш халăхĕн паллă ывăлĕ П.Е.Егоров архитектор – Тăван çĕршывшăн чи пысăк та пархатарлă ĕçсем тунă çынсенчен пĕри. Хăйĕн мĕн пур ăс-хакăл пуянлăхне вăл халăха парнеленĕ. Пирĕн институт унăн пурнăçĕпе ĕç-хĕлĕ çинчен "Архитектор Петр Егоров" кĕнеке хатĕрлесе кăларчĕ. Авторĕ – Э.Ф.Кузнецова, кĕнекене пухса хатĕрлекенĕ тата редакторĕ – А.А.Трофимов, вăлах П.Е.Егоров архитектор сăнарне монументлă скульптура туса вилĕмсĕрлетрĕ. Чăваш наци конгресĕ те паллă архитектор çинчен брошюрăсем, буклетсем хатĕрлесе кăларчĕ, юбилей ячĕпе мероприятисем ирттерчĕ", – терĕ.

Тĕнчипе палăрнă чăваш архитекторĕн ĕлккен ĕçĕсем паянхи кун та Питĕр хулине илем кÿреççĕ. Искусствоведени докторĕ А.А.Трофимов та унăн ĕçне хакласа сăмах каларĕ: "П.Е.Егоров вырăс классицизмĕн юхăмне йĕркелесе яракансенчен пĕри пулнă. Ун çинчен историксемпе журналистсем сахал мар çырнă, анчах та вăл чăваш иккенне палăртасшăн пулман. Халĕ институт кăларнă кĕнекере унăн ĕçне тĕплĕн ĕçтатма тăрăшрăмăр. Э.Ф.Кузнецова институт архивĕ валли шаршан чухлĕ ал çырăвĕ, сăн ÿкерчĕксем, документсем илсе килчĕ. Паллах, ку кĕнеке тухнă хыççăн çĕннине темех калаймăн, анчах çак юбилей кунĕнче П.Е.Егоров архитекторăн чи пĕлтерĕшлĕ, чи хаклă ĕçĕсене палăртса хăвармаллах".

Петр Егоров Санкт-Петербургра 1753 çулта ĕçлеме пуçланă. Унăн чи малтанхи ĕçĕ – Екатерина чиркĕвĕ. 1763 çулта вăл II Кĕтерне хушнипе çак чиркĕвĕн проектне хатĕрленĕ. Пурĕ пилĕк çул ĕçленĕ. Проект вăра Балтика тăрăхĕнчи православи храмĕсене тумалли тĕслĕх пулса тăнă. Халĕ Эстонири асăннă чиркÿ çине çав чиркĕвĕн авторĕ П.Егоров пулни çинчен Асăну хăми çакнă, анчах та вăл чăваш пулнине палăртман.

1768 çулта П.Егоров хăй вĕрентекенĕпе пĕрле Мрамор кермен проектне хатĕрлеме пуçланă. 1785 çулта ăна йышăннă. Майра патшана кермен питĕ килĕшнĕ, архитектора вăл чаплă йышăннă, пысăк укça тÿленĕ. Çавăн хыççăн П.Е.Егоров вара лайăх пурăнма пуçланă. 1769-1774 çулсенче П.Егоров Нева шывĕ çумĕнчи павильон проектне хатĕрлекен конкурса хутшăннă, иккĕмĕш вырăн йышăннă. Ун хыççăн Спиридовпа Синявин адмиралсен керменĕсен проекчĕсене тунă. Чаплă архитектора Хĕллехи кермен, Смольнăйри мăнастир проекчĕсене тунă çĕре хутшăнтарнă. Раштав чиркĕвĕ вара – унăн чи чаплă ĕçĕсенчен пĕри. 5 купол, 4 апилястор, капители, 3 иконостас, 4 енчен кĕмелли алăксем – çакă йăлтах культура, архитектура тата ÿнер искусствин чи ĕлккен тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ.

Унăн Çуллахи сад картине те чăнчăн искусство, тĕнчери чи илемлĕ ĕçсенчен пĕри тесе шутлаççĕ. Пĕтĕм тĕнче ун çинчен калаçать.

Франциерен пĕр паллă çын çавна ятарласа курма килнĕ хыççăн çапла каланă: "Килтĕм, куртăм, халĕ ĕнтĕ чун лăпланчĕ. Çакăн пек чаплă япалана курнă хыççăн киле тулли кăмăлпа таврăнатăп".

Гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕ В.Г.Харитонова П.Е.Егоров çинчен кĕнеке хатĕрленĕ май уйрăм фонд йĕркелени пирки пĕлтерчĕ. Халĕ унта пурĕ – 14 папка. Упранакан материалсен хушшинче архитекторăн пурнăçĕпе ĕç-хĕлне сутатакан сăн ÿкерчĕксем, портрет, вĕреннĕ чухнехи тата чаплă проектсем тунă чертежсен копийĕсем, çав шутра – Мрамор керменпе Раштав чиркĕвĕн, Çуллахи сад картин проекчĕсем, ăна пăхса çитĕнтернĕ çынсен сăн ÿкерчĕкĕсем – пурĕ 800 экспонат.



• П.ЕГОРОВ АРХИТЕКТОР ПАЛĂКĔ УМНЕ ЧЕЧЕКСЕМ ХУНĂ САМАНТ.

Паллă архитектора асăнса йĕркеленĕ каçра Иван Ведянин ĕç-хĕлĕпе пурнăçĕ çинчен хатĕрлесе кăларнă кĕнекене те пахаларĕç.

Сăмах юлашкинчен паянхи архитектура çине куçрĕ. ЧНК президенчĕ Г.Н.Архипов Шупашкар архитектура тĕлĕшĕнчен пăхсан чăваш халăхĕн шĕкĕр хули пек курăнманни çинчен пăшăрханса каларĕ.

– Пирĕн хамăрăн чăваш архитектурине аталантармалла. Шупашкар хула архитектуринче паянхи кун чăвашлăх çук, чăваш тĕррипе, чăваш символĕсемпе, тĕсĕпе усă курмаççĕ. Хулан çурçĕр пайĕнче симĕс куполсем, мечĕт евĕр симĕс тăрăсем пĕр вĕçĕмсĕр ÿссех пыраççĕ. Эпир «тутарлансах» каятпăр капла, – терĕ вăл.

– Архитекторсем Хусантан вĕренсе тухнă, çавăнпа вăл, – сăмах тĕртсе илчĕ Чăваш халăх художникĕ Праски Витти.

– Хула варринче пушă вырăн сахаллансах пырать, – терĕ малалла Г.Н.Архипов., – Парксенчи йывăççене касса çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем тăваççĕ. Строительство техникумĕ умĕнче мĕн чухлĕ йывăçа касса тăкнă. Çуртсене çул хĕрринех тăваççĕ. Патшалăх банкĕпе электричество таварĕсем сутакан лавкка хушшине казино чиксе лартрĕç. Ярославль урамĕ тĕп урам пекех сарлака пулмалла, унта та каллех çуртсем хăпартаççĕ. Пятницкий кĕперĕ патĕнче бензоколонка туса хучĕç. "Победа" кинотеатрпа Хусанкай урамĕ хĕресленнĕ вырăнта – пурăнмалли çурт, унăн чÿречи çумĕнчех тепĕр çурт çĕкленет. Чечек клумбисем пулмалла вĕт унта. Республика лапамĕнче сквер пур. Çынсем вĕçĕмех пырса çÿреççĕ, канаççĕ, уçăлаççĕ. Наци музейĕн çуртне туса хучĕç. Мĕн чăвашлăхĕ пур унта? Юрать, ятне чăвашла çырса хучĕç. Атăл хĕрринчи юхан шыв портне завод корпусĕ пек туса лартрĕç. Урам ячĕсене чăвашла çырнă, анчах йăнăш мĕн чухлĕ! Куçару комиссийĕ пур çĕртех.

Пухăннисем хула архитектуринче чăвашлăха аталантармалли пирки чылай сĕнÿ пачĕç.

**Л.САЧКОВА.**